Ответы на олимпиадные задания по чувашскому языку и литературе для муниципального тура республиканской олимпиады школьников общеобразовательных организаций с обучением на чувашском языке 2017-2018 учебный год. 9 класс

Максимальный балл – 50

1. Виталий Петрович Никитин-Станьял.

Ячĕшĕн – 1 балл, ашшĕ ячĕшĕн – 1 балл, хушамачĕшĕн – 1 балл, псевдонимшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

2. *Черчен – чи черчен, чипер – чи чипер, пуян – чи пуян, янăравлă – чи янăравлă.*

Тупнăшăн – 0,5-шер балл, вăйлă виçере çырнăшăн – 0,5-шер балл. Енчен те *чăн чипер, чăн чипер, чип-чипер, чăн пуян, чăн янаравлă* формăсене илсе парсан (пĕр паллă ячĕпе те пулин) тепĕр 1 балл хушăнать. Пĕтĕмпе – 5 балл.

3. Тĕрĕс. Уçă сасăпа пĕтекен глагол çумне пултараслăх аспекчĕн аффиксĕ *-ей,* ун çумне хальхи вăхăт аффиксĕ *-ет*, унтан 1-мĕш сăпат аффиксĕ *-п*, ун çумне *-ĕр* нумайлă хисеп аффиксĕ хушăннă. Чăваш чĕлхин саккунĕпе икĕ уçă сасă тăма пултарайманнине пула икĕ уçă сасă хушшине хупă сасă кĕрсе ларнă: *те+ей++ет+п+ĕр > те+(й)ей++ет+п+ĕр.* Чăваш çырăвĕнче *йэ* сасăсен çыхăнăвне *е* сас паллипе палăртаççĕ, çавăнпа юнашар виçĕ *е* çырмалла пулса тухать.

Тĕрĕс тесе палăртнăшăн – 2 балл, ăнлантарнăшăн – 3 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

4. *Курак – курка*.

***Курак* сăмахшăн – 3 балл, *курка* сăмахшăн – 2 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.**

5. Хутлă. 2 предложенирен тăрать.

Чĕлхемĕр черчен те чипер, пуян та янăравлă (1)тееетпĕр(2).

Хутлă тесе палăртнăшăн, предложени шутне кăтартнăшăн, 1-мĕш предложенири подлежащишĕн, 1-мĕш предложенири сказуемăйсемшĕн, 2-мĕш предложенири сказуемăйшăн – 1-ер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

6. *Эл* «ял, çĕр-шыв» тата *тĕпер* «пуçлăх, тĕп ар» сăмахсенчен пулнă. Пăлхарсен аслă пуçлăхне пĕлтернĕ.

Сăмахăн кашни пайне ăнлантарнăшăн – 2-шер балл, пĕлтерĕшне пĕлнĕшĕн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

7. «Хăтлă пĕлÿ».

Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.

8. Публицистика сăмах латин чĕлхинчен куçарсан «халăхпа калаçни» тенине пĕлтерет. Унăн тĕп тĕллевĕ – саманан чи çивĕч, пысăк пĕлтерĕшлĕ, халăха кирлĕ ыйтăвĕсене хускатасси. Н. Никольский, И. Ахах, Г. Тал-Мăрса, М. Аруй, Д. Эльмен, И. Тăхти, Ç. Элкер, Хумма Çеменĕ, Исаев Мĕтри, Иван Мучи, Çĕпритун Шăпчăк ăнăçлă ĕçленĕ.

Теоришĕн – 2 балл. Кашни ятшăн – 0,5-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

9. Н.Я. Бичурин. «Байкал» очерк.

Авторне пĕлнĕшĕн – 1 балл, хайлав ячĕпе жанрĕшĕн – 2-шер балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

10. Хĕрлĕ, симĕс, сарă, сенкер, хура.

Кашни тĕрĕс хуравшăн – 1 балл. Пĕтĕмпе – 5 балл.

Пĕлсе тăма! Кашни ыйтăва тĕрĕс хуравласан чи нумаййи 50 балл пухма пулать.